БИБЛИОТЕКА им. М. Горького №

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Август 22 шăматкун № 164 (9073)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Мускава Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ килсе çитни (1 стр.).
Демократиллĕ Германи Республикин Премьер-Министрĕ Отто Гротеволь Мускава килсе çитсен аэродромра тухса каланă сăмах (1 стр.).
СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков Демократиллĕ Германи Республикин Правительство Делегацине йышăнни (1 стр.).
В. М. Молотов Демократиллĕ Германи Республикин Премьер-Министрне О. Гротеволе йышăнни (1 стр.).
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Инди изобразительнăй искусствин выставкинче пулнă (1 стр.).
ПУÇЛАМĂШ ПАРТОРГАНИЗАЦИ ТЫРĂШАН КĔРĔШЕС ĔÇРЕ. Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхозран килнĕ çырусем (2 стр.).
ФЕЛЬЕТОН. **В. Чернов, Р. Малютин, Ф. Малышкин.**—Култаков системинчи чăпта историйĕ (2 стр.).
Уйăп Мишши.—Сĕнтĕр районĕнче (3—4 стр.).
П. Яжейкин.—Чăваш чĕлхин грамматикинчи хăшпĕр тавлашуллă ыйтусем пирки (3 стр.).
Иранри лару-тăру (4 стр.).

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн

Социализмла Тăван çĕршывшăн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем—сĕт-çу, аш-какай, çăмарта, çăм тата ытти продуктсем хатĕрлени питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать. Çавна асра тытса, республикăри ялхуçалăхĕнче малта пыракансен кăçалхи апрельте пулса иртнĕ канашлăвĕ общественнăй выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана кашни колхозра, кашни районта тата пĕтĕм республикипе ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илчĕ.

Малта пыракан колхозсем социализмла ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене, çав шутра государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана та ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ.

Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз 1953 çулхи государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана августăн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнă. Вăрнар, Муркаш, Советски, Шăхасан районĕсенчи колхозсем аш-какай памалли 9 уйăхри плана срокчен пурнăçланă. Красноармейски районĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес енĕпе республикăра малта пыраççĕ. Августăн 10-мĕшĕ тĕлне ку районта аш-какай памалли çулталăкри плана—65 процент, çăмарта памалли плана 87 процент, сĕт-çу енĕпе—73 процент, çăм хатĕрлемелли плана 60 процент тултарнă. Вăрнар тата Шăхасан районĕсенчи колхозсем те ку ĕçре малта пыраççĕ.

Партипе совет органĕсем хатĕрлев ĕçĕсене куллен ертсе пыракан, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев органĕсен руководителĕсене тивĕçлипе пулăшса, вĕрентсе пыракан, массăлла ăнлантару ĕçне лайăх организациленĕ районсенче выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç, ытти ĕçсем пекех, ăнăçлă пулса пырать.

Республикăра чылай колхозсем тата колхозниксем 1953 çулхи плана срокчен тултарса, 1954 çулхи план шучĕпе государствăна аш-какай тата ытти продуктсем параççĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçлакан колхозсемпе колхозниксем сахал мар. Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, республикăра аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тата ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха.

Ку тĕлĕшпе Куславкка, Шăмăршă, Улатăр, Кувакино, Пăрачкав районĕсем уйрăмах кая юлнă. Куславкка тата Шăмăршă районĕсенчи колхозсем аш-какай хатĕрлемелли çулталăкри плана 32—39 процент, çăмарта хатĕрлемелли плана 16—37 процент, сĕт-çу хатĕрлемелли плана 38—45 процент, çăм хатĕрлемелли плана 33—42 процент кăна тултарнă.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç юлса пыни пуринчен малтан хатĕрлев дисциплинине пăснинчен килет. Уйрăм райисполкомсем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев органĕсен ĕçне вăхăтра тĕрĕслемеççĕ, хатĕрлев ĕçĕнче дисциплинăна çирĕплетме кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ кая юлнă районсенче колхозсемпе колхозниксем чылайăшĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас енĕпе парăма кĕнĕ. Парти тата совет органĕсем енчен выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе ертсе пырассине таткăн лайăхлатмалла. Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене аякалла салатас йăлана çийĕнчех пĕтермелле. Çакăнпа пĕрлех государствăна пысăк пахалăхлă продукци парасси пĕтĕм колхозсен, колхозниксен, выльăх-чĕрлĕх усракан хуçалăхсен пысăк тивĕçĕ пулни çинчен куллен-кун ăнлантарса парас ĕçе организацилени кирлĕ. Государствăна лайăх самăртнă выльăх пани государствăшăн та, колхозсемпе колхозниксемшĕн те усăллă.

Хатĕрлев пунктне ырхан выльăх пани пулмалла мар, мĕншĕн тесен ырхан выльăх панă чухне пĕр выльăх вырăнне иккĕçĕ пуç выльăх пама тивет. Çакă вăл общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес ĕçе сиен кÿрет. Çавăнпа та выльăхсене хатĕрлев организацисене парас умĕн çитерсе самăртасси çине тимлĕн пăхни кирлĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре Чăвашпотребсоюз тата «Маслопром», «Заготскот», «Заготживсырье» кантурĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен çавранăçулăхĕнчен, хатĕрлев ĕçне оперативлă та конкретлă ертсе пынинчен колхозсемпе колхозниксем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли плана вăхăтра пурнăçласси нумай килет. Асăннă организацисен ĕçне пур майсемпе те лайăхлатса пырас пулать.

КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ, республика выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе юлса пынине палăртса, Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлекен организацисене, çавнашкалах КПСС райкомĕсемпе райисполкомсене выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе вăйлатма, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли плана социализмла обязательствăсенче йышăннă срокра — ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма хушса хăварчĕ.

Çакă ĕнтĕ аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм тата ытти продуктсем хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртăва анлăн сарас тесе куллен-кун тăрăшмаллине пĕлтерет. Хатĕрлев органĕсенче ĕçлекенсене ял Совечĕсен, колхоз правленийĕсемпе пуçламăш парторганизацисен пулăшмалла. Районти хатĕрлев ĕçĕ мĕнле пулса пынине сводка тăрăх кăна пĕлни çителĕксĕр. Ку ĕç кашни уйрăм колхозра мĕнле пулса пыни çинчен райсовет исполкомĕсен ларăвĕсенче, ял Совечĕсен сессийĕсенче тата пуçламăш парторганизацисен пухăвĕсенче тăтăшах сÿтсе явас пулать. Парторганизацисен колхоз ĕçченĕсем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе анлăн сарса, витĕмлĕ туса пымалла. Кашни колхозник, пур ĕçсыннисем те çакна тĕплĕн ăнланса илчĕр: государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçлани коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçе активлă хутшăнни пулать.

Пирĕн Тăван çĕршывра мĕнпур ĕçсыннисем умра тăракан задачăсене пурнăçлассишĕн пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ. СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисене, сессире СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ тухса каланине совет халăхĕ ырласа йышăнчĕ. Совет правительствипе партин Центральнăй Комитечĕ пĕтĕм халăх хуçалăхне, вăл шутра ялхуçалăхне малалла вăйлатма, халăх пурнăçне малалла лайăхлатса пыма тăрăшса конкретлă ĕçсем тăваççĕ. Уйрăммăн илсен, колхозсем обязательство шучĕпе государствăна паракан аш-какай, сĕт, çăм, çĕрулми тата пахча çимĕçсен хатĕрлев хакĕсене кăçалах пысăклатма йышăннă. Колхозниксене ялхуçалăх налогĕ тĕлĕшпе пысăк çăмăллăх панă.

Кашни ĕçсынни хăй тума тивĕçлĕ ĕçсене тимлĕн пурнăçлани, государство умĕнчи обязательствăсене, тырпул хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн кĕрешни пекех, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли плана та срокчен тултарни Совет Правительствипе Коммунистсен партийĕ халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшни çине чи лайăх ответ пани пулать.

Мускава Демократиллĕ Германи Республикин Правительство делегацийĕ килсе çитни

Августăн 20-мĕшĕнче Мускава Совет Правительстви чĕннипе Демократиллĕ Германи Республикин правительство делегацийĕ килсе çитнĕ. Делегацие Демократиллĕ Германи Республикин Премьер-Министрĕ О. Гротеволь ертсе пырать. Делегацие çаксем кĕреççĕ: Премьер-Министр Заместителĕ В. Ульбрихт, Премьер-Министр Заместителĕ О. Нушке, Премьер-Министр Заместителĕ тата Строительство Министрĕ доктор Л. Больц, Премьер-Министр Заместителĕ тата Финанс Министрĕ доктор Г. Лох, Демократиллĕ Германири Наци фрончĕн Наци Совечĕн Председателĕ профессор Э. Корренс, Государство План Комиссийĕн Председателĕ Б. Лейшнер, Нимĕçсен ирĕклĕ профсоюзĕсен Пĕрлешĕвĕн Председателĕ Г. Варнке, Ирĕклĕ нимĕç çамрăкĕсен Союзĕн Центральнăй Совечĕн Председателĕ Э. Хонекер, Ял тата вăрман хуçалăх Министрĕ Г. Рейхельт, Тулашри тата Германири шалти суту-илÿ Министрĕ К. Грегор, Металлурги тата сăрт-ту промышленность Министрĕ Ф. Зельбманн, Демократиллĕ Германи Республикин Мускаври Дипломатиллĕ Миссийĕн Пуçлăхĕ Р. Аппельт, Германири Демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕн Представителĕ И. Тиле, Демократиллĕ Германи Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Сотрудникĕ П. Флорин, делегаци Секретарĕ Л. Эйзерман. Делегаципе пĕрле Демократиллĕ Германи Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Протокол пайĕн Начальникĕ Ф. Тун килнĕ.

Центральнăй аэродрома делегацие СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ, СССР Шалти тата Тулашри суту-илÿ Министрĕ А. И. Микоян, СССР Министрĕсен Совечĕн Государство План Комитечĕн Председателĕ М. З. Сабуров, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Заместителĕ А. А. Громыко, СССР Шалти тата тулашри суту-илÿ Министрĕн Заместителĕсем И. Г. Кабанов тата С. А. Борисов, ССР Союзĕн Германири Верховнăй Комиссарĕ посол В. С. Семенов, Моссовет Председателĕ М. А. Яснов, Мускав хулин коменданчĕ генерал-лейтенант К. Р. Синилов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Коллегийĕн Членĕ, Европа енĕпе ĕçлекен 3-мĕш пайĕн Заведующийĕ Г. М. Пушкин, СССР Шалти тата тулашри суту-илÿ Министерствин Демократиллĕ Германи Республикинчи Уполномоченнăйĕ И. Ф. Семичастнов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Протокол пайĕн Заведующийĕн ĕçĕсене туса пыракане В. В. Пастоев, çавăн пекех тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствипе СССР Шалти тата тулашри суту-илÿ Министерствин ытти ответлă сотрудникĕсем кĕтсе илнĕ.

Делегацие çавăн пекех тата Демократиллĕ Германи Республикин Дипломатиллĕ Миссийĕн Пуçлăхĕ Р. Аппельт Дипломатиллĕ Миссин ытти членĕсемпе пĕрле, Болгари Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ С. Благоева, Венгри Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ А. Складан, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Лим Хэ, Демократиллĕ Вьетнам Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Нгуен Лонг Банг, Китай Халăх Республикин Вăхăтлăх Поверенннăй Гэ Бао-цюань, Румыни Халăх Республикин Вăхăтлăх Поверенннăйĕ Ш. Дуку, Польша Халăх Республикин Вăхăтлăх Поверенннăйĕ А. Малэцкий, Чехословаки Республикин Вăхăтлăх Поверенннăйĕ Д. Ечны, Монголи Халăх Республикин Вăхăтлăх Поверенннăйĕ Н. Лувсанчултэм, Албани Халăх Республикин Вăхăтлăх Поверенннăйĕ У. Люле кĕтсе илнĕ.

Кĕтсе илнĕ чухне хисеплĕ хурал тăратнă тата Демократиллĕ Германи Республикипе Совет Союзĕн Государство Гимнĕсене каланă.

Аэродрома Демократиллĕ Германи Республикипе Совет Союзĕн Государство ялавĕсемпе илемлетнĕ пулнă. (ТАСС).

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков

Демократиллĕ Германи Республикин Правительство Делегацине йышăнни

Августăн 20-мĕшĕнче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ **Г. М. Маленков** Демократиллĕ Германи Республикин Правительство Делегацине — Премьер-Министра Отто **Гротеволе**, Премьер-Министр Заместительне Вальтер **Ульбрихта**, Премьер-Министр Заместительне Отто **Нушкене**, Премьер-Министр Заместительне тата Строительство Министрне Лотар **Больца**, Премьер-Министр Заместительне тата Финанс Министрне Ганс **Лоха**, Демократиллĕ Германири Наци фрончĕн Наци Совечĕн Председательне профессор **Э. Корренса**, Государство План Комиссийĕн Председательне Бруно **Лейшнера**, нимĕçсен ирĕклĕ профсоюзĕсен пĕрлешĕвĕн Председательне Герберт **Варнкене**, ирĕклĕ нимĕç çамрăкĕсен Союзĕн Центральнăй Совет Председательне Эрих **Хонекера**, Ял тата вăрман хуçалăх Министрне Ганс **Райхельта**, Тулашри тата Германири шалти суту-илÿ Министрне Журт **Грегора**, Металлурги тата сăрт-ту промышленность Министрне Фриц **Зельбмана**, Демократиллĕ Германи Республикин Мускаври Дипломатиллĕ Миссийĕн Пуçлăхне Рудольф **Аппельта**, Германири демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕн Представительне Ильза **Тилене**, Демократиллĕ Германи Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Сотрудникне Петр **Флорина** йышăннă.

Совет Союзĕ енчен калаçусене çак юлташсем хутшăннă: **В. М. Молотов, Н. С. Хрущев, Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, М. З. Сабуров**, Финанс Министрĕ **А. Г. Зверев**, Шалти тата тулашри суту-илÿ Министрĕн Заместителĕ **И. Г. Кабанов**, Совет Союзĕн Германири Верховнăй Комиссарĕ посол **В. С. Семенов**, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Коллегийĕн Членĕ **Г. М. Пушкин**.

Калаçусем ăшă кăмăлпа, туслăн иртнĕ.

В. М. Молотов Демократиллĕ Германи Республикин Премьер-Министрне О. Гротеволе йышăнни

Августăн 20-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов Демократиллĕ Германи Республикин Премьер-Министрне Отто Гротеволе йышăннă.

Йышăнура ССР Союзĕн Германири Верховнăй Комиссарĕ посол В. С. Семенов пулнă.

Куйбышев гидроэлектростанцине тума пуçланăранпа виçĕ çул çитрĕ

КОМСОМОЛЬСКИ ПОСЕЛОК (Куйбышев облаçĕ), августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Министрĕсен Совечĕ «Атăл çинче Куйбышев гидроэлектростанцине тăвасси çинчен» постановлени пичетлесе кăларнăранпа августăн 21-мĕшĕнче виçĕ çул çитрĕ. Çак вăхăт хушшинче Жигулире пысăк ĕçсем туса иртнĕ. Строительсем котловансенчен нумай миллион кубометр тăпра кăларса, ăна перемычка çине купаланă, 200 пин кубометра яхăн бетон хывнă, миллионшар тонна тĕрлĕ грузсем турттарнă.

Кунти вырăн палламалла мар улшăннă. Хăйăр, чул тата хурçă купаласа пысăк та çÿлĕ перемычка туса лартнă, вăл Атăла çурри таран кĕрсе тăрать. Могутово сăрчĕ хĕрринчи пĕтĕм айлăма тенĕ пекех ГЭС-ăн пысăк котлованĕ йышăнать, Нумаях пулмасть çĕр чавакан машинăсем унăн тĕпĕнче ĕçлеме пуçланă. Халĕ кунта бетон хурас ĕçе тытăннă. Бетон хунипе пĕрлех ГЭС котлованĕнче бетон турттаракан эстакада тума пуçланă. Хăватлă крансем вырнаçтарса лартаççĕ.

Атăлăн сулахай çыранĕнче те пысăк ĕçсем пыраççĕ. Атăла юхса кĕрекен пĕчĕк шывăн çыранĕ пулнă вырăнта, Комсомольски поселокĕнче инçетри мар вырăнта, пăрахутсем çÿреме тăвакан анатри шлюз площадки сарăлса выртать. Строительсем шлюз тĕпне бетон хывса пĕтернĕ те ĕнтĕ. Халĕ вĕсем камера стенисене тума тата тури шлюзра ĕçлеме тытăннă. Бетон хурас ĕçре хăватлă насуссемпе усă кураççĕ. Гусеничнăй тракторсем пулăшнипе арматура, фермăсем вырнаçтарса лартаççĕ. Çитес кунсенчех 15 тонна çĕклекен кабель-кран ĕçлеме тытăнать. Çакă монтаж ĕçĕсене чылай çăмăллатать.

Строительствăра производствăлла-техникăлла ĕçсем валли хăватлă никĕс туса хунă. Чугун çулсем, шоссе çулĕсем, пысăк вольтлă линисем, гаражсем, складсем, тĕрлĕрен мастерскойсем туса лартнă. Атăлăн икĕ енче автоматизациленĕ виçĕ бетон завочĕ ĕçлеме тытăннă. Çак заводсем кашни талăкра икĕ пиншер кубометр бетон хатĕрлесе кăлараççĕ. Могутово сăрчĕ хĕрринче чул хатĕрлекен завод ĕçлеме пуçланă. Кăçал строительсен бетон завочĕсем 6, чул завочĕсем 3, механизмсемпе автомашинăсене юсакан заводсем çĕнĕрен туса лартмалла.

Строительство площадкисемпе юнашар, Атăл çыранĕсенчи илемлĕ вырăнсенче, гидростанци тăвакансен виçĕ поселокĕ: Комсомольски, Портовый, Шлюзовой поселоксем ÿссе ларнă. Строительсемпе нефтяниксен хули Жигулевск çултан-çул илемленсе пырать. Виçĕ çул хушшинче гидроэлектростанци тунă çĕрте ĕçлекенсем валли 200 пин тăваткал метр ытла пурăнмалли çĕнĕ çуртсем, клубсем, вăтам шкулсем, çăкăр завочĕсем, мунчасем, столовăйсем, больницăсем, поликлиникăсем тата ытти культурăпа йăла учрежденийĕсем туса лартнă.

Жигулири стройкăра гидростроевецсен чаплă коллективĕ ÿссе çитĕннĕ. Михаил Евец, Василий Клементьев, Владилен Мячев, Василий Лямин механизатор-экскаваторщиксен ячĕсене пĕтĕм çĕршыв пĕлсе тăрать. Вĕсем машинăсемпе тата механизмсемпе туллин усă курассишĕн, кашни кубометр тăпра кăларма тухакан расхода чакарассишĕн ăмăрту пуçарса янă.

Стройкăра Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă çĕрте ĕçленĕ рабочисем те ăнăçлă ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче—Социализмла Ĕç Геройĕ электросварщик Алексей Улесов, экскаватор бригадирĕ Иван Ермолаенко.

«Куйбышевгидростройра» ĕç хăвăртлăхĕ кунтан-кун ÿссе пырать. Юлашки кунсенче çĕр чавнă çĕрте талăкра 120 пин кубометр ытларах тăпра кăлараççĕ. Хăшпĕр кунсенче 3 пин кубометр таран бетон хываççĕ.

Гидроузел строительствинче пин йышши ытла машинăсемпе, механизмсемпе, инструментсемпе ĕçлеççĕ. Çĕршыври çĕршер предприятисем кунта хăйсен продукцине ярса тăраççĕ. Кашни талăкра строительствăна машинăсем, строительство материалĕсем, оборудовани тиенĕ вагонсем 200 ытла килсе тăраççĕ. Кунсăр пуçне, шыв çулĕ тăрăх талăкне пин тонна яхăн груз килсе тăрать.

Куйбышеври ГЭС строителĕсен коллективĕ, СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсемпе хавхаланса, строительствăпа монтаж ĕçĕсене правительство палăртса панă срокченче пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлет.

Демократиллĕ Германи Республикин Премьер-Министрĕ Отто Гротеволь Мускава килсе çитсен аэродромра тухса каланă сăмах

Хаклă туссем,
хаклă юлташсем!

Демократиллĕ Германи Республикин Правительство Делегацийĕ Мускав сыннисене—ССР Союзĕн мухтавлă столицин çыннисене тата пĕтĕм совет халăхне саламлать. Совет халăхĕ мирлĕ строительствăра тунă хăйĕн чаплă çитĕнĕвĕсемпе прогрессивлă мĕнпур этемлĕхе савăнтарать. Эпир Совет Союзĕн Правительствине, пĕтĕм совет халăхĕн вĕçĕмсĕр шанса тăракан тата пĕтĕм тĕнчери мĕнпур прогрессивлă, мире юратакан çынсем хисеплесе тăракан правительствăна саламлатпăр.

Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви, унпа пĕрле Германин мĕнпур патриочĕсем пирĕн Правительство Делегацине Демократиллĕ Германи Республикипе СССР хушшинчи çыхăнусене аталантармалли ыйтусене, çавăн пекех тата Германи ыйтăвĕпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăнса тăракан хальхи ыйтусене тÿрех калаçусем иртернипе сÿтсе явма чĕннĕшĕн СССР Правительствине тав тăваççĕ.

Пирĕн çĕршыври мире юратакан мĕнпур çынсем, Хĕвелтухăç тата Хĕвеланăç Германири патриотсем СССР Правительстви кăçалхи августăн 15-мĕшĕнче Франци, Великобритани тата США Правительствисене панă нотăна, çавăн пекех тата Демократиллĕ Германи Республикин Правительство Делегацине Мускава килме чĕннине хĕрÿллĕн саламлаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем çакăнта Германи пĕрлĕхне туса хурас тата Германипе мирлĕ договор тăвас енĕлле пысăк утăм тунине кураççĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви çакна шанса тăрать: çак калаçусене ирттернипе Демократиллĕ Германи Республикипе Совет Союзĕ хушшинчи туслă хутшăнусене малалла аталантарас ĕçре çĕнĕ пысăк тапхăр пуçланать.

Эпир аслă совет халăхĕ мире юратакан нимĕç халăхне мир тата демократи низĕсĕсем çинче çĕнĕ пурнăç туса пырас ĕçре ялан чĕререн пысăк кăмăлпа пулăшу парса тăнăшăн хамăр чĕререн тав тунине калаcа пама пултарнăшăн савăнатпăр.

Совет Союзĕнче пысăк ĕçсем тунине нимĕç халăхĕ савăнса сăнаса тăрать, Совет Союзĕн халăхĕсене коммунизма куçас ĕçре çĕнĕрен пысăк çитĕнÿсем тума пĕтĕм чĕререн ырă сунать.

Сывă пултăр та чечеклентĕр Совет çĕршывĕ—мир, демократи тата социализм ĕçĕн хăватлă тĕрекĕ!

Сывă пултăр Совет Правительстви тата Совет Союзĕнчи мухтавлă Коммунистсен Партийĕн Центральнăй Комитечĕ!

Сывă пултăр мире юратакан нимĕç халăхĕпе мире юратакан Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи тĕреклĕ те çирĕп туслăх!

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Инди изобразительнăй искусствин выставкинче пулнă

Августăн 20-мĕшĕнче, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов,—СССР Культура министрĕ П. К. Пономаренко, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. М. Пегов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕн Заместителĕ В. А. Зорин, СССР Культура Министрĕн Заместителĕсем С. В. Кафтанов тата И. Г. Большаков юлташсемпе пĕрле,—Инди изобразительнăй искусствин выставкинче пулнă. Выставка СССР Художествăсен Академийĕн выставкăсем иртерекен залĕнче вырнаçнă.

К. Е. Ворошилова тата унпа пĕрле пыракансене Индин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ К. П. Ш. Менон, Пĕтĕм Индири изобразительнăй искусствăпа прикладной искусствăсен обществин Хисеплĕ Генеральнăй Секретарĕ Барада Укил, выставкăпа пĕрле Совет Союзне килнĕ Инди художникĕсен делегацийĕ, çавăн пекех Мускаври художниксен представителĕсем, СССР Художествăсен Академийĕн президенчĕ А. М. Герасимов кĕтсе илнĕ.

К. Е. Ворошилов Инди художникĕсен картинисемпе скульптурисен выставкине пит сехет хушши курса çÿренĕ. (ТАСС).

Комбайнерсем Казахстана каяççĕ

СТАВРОПОЛЬ. Крайри нумай районсенче колхозсем тыră вырса пĕтернĕ, халĕ выльăх апачĕ хатĕрлеççĕ, кĕрхи çĕртме тăваççĕ, кĕрхи тырăсем акма çĕре çемçетсе хатĕрлеççĕ. Комбайнерсен ушкăнĕсем, машинисĕне те пĕрле илсе, çĕршывăн хĕвелтухăçĕнчи районсене тырпул пухса кĕртме каяççĕ.

Çак кунсенче Казахстана тата Тюмень облаçне 400 комбайнер тухса кайнă. Ставрополь крайĕнчи 1.500 механизатор çĕршывăн хĕвелтухăçĕнчи районĕсене тырпул пухса кĕртме каяççĕ. (ТАСС).

Государствăна—тыră

ИШЛЕЙ. Жданов ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем кĕрхи тырăсене кĕске срокра, пĕр тăккаламасăр вырса пĕтерчĕç. Кĕлте турттарса капана хывассине тата авăн çапассине малтанхи кунсенчех йĕркелерĕç. Сложнăй молотилкăпа çĕрĕн-кунĕн ĕçлерĕç. 5-мĕшпе 6-мĕш бригадăсем ыраш çапса пĕтерчĕç. Халĕ Тăван çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе сентябрĕн 1-мĕшĕччен пурнăçлама социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Государствăна тыră памалли графика иртерсе тултарса пыраççĕ.

Т. Савельев шофер Шупашкарти хатĕрлев пунктне кашни кун ик-виçĕ рейс туса 3—4 тонна тыră леçет. Кунсăр пуçне, транспорт бригади 10—15 лавпа хатĕрлев пунктне тыră турттарать. Ку ĕçре комсомолецсем паха тĕслĕх кăтартаççĕ.

И. ХМЕЛЕВ.

Кĕраки ĕçĕсене хăвăртлатмалла

ЙĔПРЕÇ. Крупская ячĕпе тăракан тата «Искра» колхозсем кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç. Çак ĕç «Твардеец», «X лет Октября» колхозсенче те вĕçленсе пырать.

Анчах та районти чылай колхозсенче кĕрхи тырăсем акас ĕç вăрахăн пырать. «Большевик» колхозăн планпа 220 гектар çине кĕрхи тырăсем акмалла, августăн 18-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 72 гектар çеç акнă. Кĕрхи тырăсене «Новая жизнь», «Красный партизан», «Красный урожай», «Путиловка» тата ытти колхозсенче те вăрахăн акаççĕ.

Колхозсенче уйрăммăнах кĕрхи тулă акас ĕç юлса пырать. Чылай çĕрте тулă вăрлăхĕ хатĕрлемен. «Красный партизан» колхозăн 95 гектар çине кĕрхи тулă акмалла пулсан, пĕр гектăр та акман. Калинин ячĕпе, Ленин ячĕпе тăракан, «Красный урожай» тата ытти колхозсенче кĕрхи тулă акма тытăнман.

Н. ПАВЛОВ.
Г. РУСАНОВ.

* * *

ПЕРВОМАЙСКИ, августăн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти «Красный флот», «Путь коммунизма», «Большевик», «Путь социализма», Шверник ячĕпе тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç.

Чи малтан, августăн 15-мĕшĕ тĕлне, çак ĕçе «Красный флот» колхоз вĕçлерĕ. Колхоза И. Максимов ертсе пыракан трактор бригади пулăшрĕ. Бригадăри трактористсем С. Нестеровпа А. Денисов юлташсем «НАТИ» тракторпа, В. Алексеевпа К. Козлов юлташсем «ДТ-54» тракторпа кулленхи нормăна иртерсе тултарса ĕçлерĕç. Колхоз правленийĕ трактористсен ĕçне лайăх хак туса йышăнчĕ. Халĕ тракторсемпе кĕрхи çĕртме тăваççĕ.

Н. НИКОЛАЕВ.

Кĕрхи çĕртме тăваççĕ

СĔНТĔР, августăн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). «Новая жизнь», Каганович ячĕпе тăракан, «Прожектор» колхозсем кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç. «Новая жизнь» ялхуçалăх артелĕ çитес çулла выльăхсене çулса çитерме 10 гектар çине ыраш акрĕ.

Кĕрхи тырăсене акнипе пĕрлех, чылай колхозсенче кĕрхи çĕртме тума тытăннă. МТС механизаторĕсем «Аврора» колхозра 70 гектар, Лысенко ячĕпе тăракан колхозра 30 гектар, «Гигант» колхозра 35 гектар çĕртме тунă.

(Хамăр корр.).

* * *

ЧУРАЧĂК. Сталин ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи çĕртме сухине 73 гектар, «Большевик» колхоз 100 гектар тунă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулсенче районта юлса пыракан колхозсенчен пĕри шутланнă. Çак колхоз кăçал малта пыракан колхозсемпе танах ĕçлесе пыма пуçларĕ, уйри тырпула вăхăтра пухса кĕчĕ. Халĕ кунта кĕрхи авăн çапаççĕ.

Ф. СЕМЕНОВ.

Пуçламăш парторганизаци тырăшăн кěрешес ěçре

Етěрне районěнчи Маленков ячěпе тăракан колхозран килнě çырусем

*

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн

Кěрхи тырăсене эпир пěр тăккаламасăр пухса кěртрěмěр. Ир пулакан çуртрисене те пěтěмпех вырса пěтернě. Пирěн колхозниксем кăçал нихçанхинчен те хастарлăрах ěçлеççě. Эпир вăйлă тырпул туса илтěмěр. Колхозниксене аванс шучěпе ěçкунě пуçне пěрер килограмм кěрхи тулă, пěрер килограмм çурхи тулă валеççе патăмăр. Кăçал колхозниксене ěçкунě пуçне сахалтан та 3-шер килограмм тěштырă, 3-шер тенкě укçа валеççе паратпăр.

Тухăçлă тырпул туса илесси малтан хатěрленнинчен, тырăшăн малтанхи çулах тăрăшнинчен килнине эпир лайăх пěлетпěр. Çавăнпа çитес çулхи тырпулшăн та халех пěтěм вăя хурса тăрăшатпăр.

Кăçал кěраки тумалли çěр лаптăкне агротехника кăтартнă вăхăтра, май уйăхěнчех, сухаларăмăр. Сухаласса 22—23 сантиметр тарăнăш сухаланă. Çěртмене икě хутчен культиваци турăмăр. Август уйăхě пуçламăшěнче вара акмалли пěтěм çěр лаптăкне тепěр хут сухаласа хатěрлерěмěр.

Кăçал пирěн 300 гектар ыраш акмалла. Çак лаптăк çине 5.010 тонна тислěк кăларнă. Кěракине вăрлăх участокěсенчен пухса илнě вăрлăхпа акатпăр. Вăрлăх мěнле шăтса тухнине малтанах тěреслерěмěр. Акана августăн 9-мěшěнче тытăнтăмăр.

Çитес çулхи çуркунне акмалли çěр лаптăкěсем çинче хăмăл сухалама тытăннă. Сывăх кунсенчех кěрхи çěртме сухине тума тытăнатпăр. Çуракинче акмалли чылай культурăсен вăрлăхěсене хывса çитертěмěр.

Уйри тырпулсене пухса кěртсе çитес çулхи тырăшăн кěрешнипе пěрлех, техникăлла культурăсене вăхăтра пухса кěртессишěн те колхозниксем тăрăшса ěçлеççě. 23 гектар йěтěне татса пěтертěмěр. 10 гектар çинчи йěтěне вăррине çапса илсе пулма сарса хунă. Йěтěн тупăшлă культура. Иртнě çул йěтěнрен 70 пин тенкě тупăш илнě. Йěтěн вăрри памалли плана кăçал та иртнě çулхи пекех 300 процент чухлě тултаратпăр. Кăçал йěтěнрен сахалтан та 150 пин тенкě тупăш илетпěр.

Çак кунсенчех çěрулми кăларма тытăнатпăр. Государствăна 150 тонна çěрулми памалла. Августăн 30-мěшě тěлне çěрулми памалли çулталăкри плана та тултаратпăр.

Уй-хир ěçěсене ăнăçлăн туса пынипе пěрлех общественнăй выльăх-чěрлěх çинчен те манмастпăр. Мěншěн тесен колхозăн выльăх-чěрлěх йышě мěн чухлě ытларах, тырпул тухăçлăхě те çавăн чухлě пысăкрах пулать. Ялхуçалăхěн çак икě отраслě пěр-пěрине тачă çыхăнса тăраççě, пěр-пěрне малалла аталантарса пыма пулăшаççě.

Выльăх-чěрлěх ěрчетмелли государство планне пур выльăхсем тата кайăк-кěшěк енěпе те иртерес тултарнă. Выльăх-чěрлěхрен ыткекен тупăш çулсеренех ӳссе пырать. Августăн пěрремěшě тěлне кашни сăвакан ěнерен вăтам шутпа 1.324 литр сěт, кашни сысна аминчен 11 сысна сури илнě. Кăçал эпир кашни сăвакан ěнерен вăтам шутпа 2.400 литр сěт суса илетпěр. Государствăна сěт памалли плана тахçанах тултарнă. Нумай пулмасть планран иртерсе 30 пин литр сěт парса, çěнě автомашина туянтăмăр.

Выльăх-чěрлěх валли 7.710 центнер утă, 2.100 центнер клевер утти, 100 тонна силос хатěрленě. Арпа-улăм ытлашшинех пулать. Колхозра 120 тонна силос хывмалăх башня туса çитереççě. Выльăх-чěрлěхе хупмалли çуртсене пурне те хěле хатěрлесе çитертěмěр. Çак кунсенчех ěне фермине автопоилка вырнаçтаратпăр, фермăсенче ěçлекенсем валли пурăнмалли çěнě çурт туса пěтеретпěр.

Çак пěтěм ěçсене тума колхозниксене колхозри коммунистсем хавхалантарса ертсе пыраççě. Вěсем пуçарса ертсе пынипе пирěн колхозăн общественнăй хуçалăхě вăйланса тěреклене пырать.

М. КНЯЗЬКОВ,
колхоз председателě.

* * *

Коммунистсем малти ретре

Пирěн парторганизацире 17 коммунист. Вěсем пурте ответлă вырăнсенче ěçлеççě. М. Князьков юлташ—колхоз председателě, П. Абакумов, В. Бритвин, М. Мухортов юлташсем—уй-хир бригадисен бригадирěсем, А. Шмелевпа М. Шатрова юлташсем—кладовщиксем. К. Шмелев юлташ транспорт бригадине ертсе пырать. Е. Щетинина юлташ—сěт-çу фермин заведующийě, М. Титов юлташ сысна фермин заведующийě пулса ěçлеççě. Вěсем пурте хăйсен ěçěпе ытти колхозниксене хавхалантарса пыраççě.

Коммунистсем тырпул пухса кěртнě вăхăтра, ытти ěçсенчи пекех, тăрăшса ěçлеççě. Н. Скрепков коммунист тырă вырма тухнăранпах жнейкăпа ěçлет. Кунсерен 4-шар гектар вырмалла пулсан, вăл 6—7-шер гектар вырать. Е. Васильева коммунистка, ватă пулин те, пěр ěçрен те юлмасть. Ăна кěлте сыхнă çěрте те, итем çинче те курма пулать.

Хуçалăхра çитěнӳсем тăвасси политикăлла-массăлла ěçе ăнăçлă туса пынинчен килет. Уй-хир ěçěсем вăхăтěнче политикăлла-массăлла ěç туса пыма 12 агитатор уйăрнă, вěсене бригадăсем çумне çирěплетнě. Агитаторсем пурте политика ыйтăвěсене лайăх ăнланаççě, производствăра малта пыраççě. Вěсем кулленех тěрлě темăсем тăрăх калаçусем иртереççě, хамăр çěршыври тата тěнчери лару-тăру çинчен каласа параççě, партипе правительствăн постановленийěсемпе паллаштараççě. Уй-хир ěçěсем пуçланнăранпа колхозниксем валли 7 доклад, 30 ытла калаçу иртернě. Колхозниксене кашни кунах çěнě хаçатсем вуласа параççě. Агитколлектив политикăлла-массăлла ěçе пěрмаях лайăхлатса пырас шутпа агитаторсемпе, вулавçăсемпе, боевой листок редакторěсемпе час-часах канашлусем иртерет. Вěсенче лайăх ěçлекен агитаторсен опычěпе мěнпур агитаторсене паллаштаратпăр, çитес кунсенче иртермелли ěçсем çинчен каласа паратпăр.

Колхозра стена хаçачě йěркеллě тухса тăман. Çак ыйтăва парторганизаци пухăвěнче сӳтсе яврăмăр. Стена хаçачěн редакторě пулма парти членěн кандидатне И. Титов юлташа уйăртăмăр. Халě уйăхра икшер номер стена хаçачě кăларатпăр. Малтан кашни номерах 6-шар экземпляр кăларса пынă пулсан, уй-хир ěçěсем пуçлансан 8-шар экземпляр кăларма пуçларăмăр. Стена хаçачěпе боевой листоксем уй-хир ěçěсенче малта пыракансен паха опытне, вěсен ěç меслечěсене сутатаççě, юлса пыракансене, кахалсене критиклеççě.

Ěçре çитěнӳсем тума пулăшакан тěп меслет вăл социализмла ăмăрту пулать. Коммунистсем социализмла ăмăртăва пуçарса пыракансем пулса тăчěç. Колхозра тăватă бригада. Вěсем кашниех гектартан вăтам шутпа 15 центнертан кая мар тěштырă туса илессишěн, мěнпур ялхуçалăх ěçěсене пысăк пахалăхпа тата кěске срокsенче пурнăçлассишěн ăмăртса ěçлеççě. Пуçламăш парторганизаци социализмла ăмăрту мěнле сарăлса пынине тăтăшах тěреслет. Ăмăрту итогěсене парти пухăвěсенче час-часах сӳтсе яватпăр, бригадăсем обязательствăсене мěнле пурнăçласа пынине тăтăшах тěреслесе тăратпăр.

Тырпул пухса кěртес ěçсенче П. Абакумов коммунист ертсе пыракан бригада мала тухрě. Уй-хирти ěçсем пуçлансанах бригадăра пěтěм ěçе сдельщина йěркипе туса пыма пуçланă. Бригадир уйра ěçлекен кашни колхозника куллен мěн чухлě ěç тумаллине кăтартса парать, ěçěн пахалăхне тěреслесе тăрать.

Тырпул пухса кěртме тытăннă малтанхи кунсенчех П. Абакумов юлташ бригадинче социализмла ăмăртăва мěнле йěркелени çинчен коммунистсен пухăвěнче сӳтсе явнă. Хăшпěр бригадăсенче социализмла ăмăрту начар сарăлса пыни палăрчě. Çак çитменлěхе пěтерес тěлěшпе мěн-мěн тумаллине, П. Абакумов юлташ ертсе пыракан бригадăн опытне сарма палăртрăмăр. Ăмăрту мěнле пынине куллен тěрěслесе тăма уйрăм коммунистсене порученисем патăмăр. Вěсем хăйсене панă ěçе пурнăçлаççě. Ăмăрту итогěсене бригадăсенчи пухусенче пăхса тухатпăр, кăтарту хăми çине çыратпăр.

Политикăлла-массăлла ěçе куллен туса пыни, колхозниксем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса яни уй-хир ěçěсене вăхăтра туса пыма май пачě. 324 гектар çинчи кěрхи тырăсене 7 кун хушшинче вырса пěтертěмěр, пěтěм вырнă тырра капана хывнă, 244 гектар çинчи ыраша çапса пěтернě. Çуртри вырас ěç те лайăх пулса пырать. Тулă, сěлě, пăрçа тата ытти ир пулакан культурăсене пěтěмпех вырса, 75 процентне çапса пěтертěмěр.

Тырпула вăхăтра та пěр тăккаламасăр пухса кěртес ěçре колхоза МТС механизаторěсем нумай пулăшрěç. Ыраш вырнă çěрте В. Токсубаев юлташ «С-6» комбайнпа кунсерен 14—15 гектар, А. Шмелев юлташ самоходнăй комбайнпа 10—12 гектар вырса пычěç. Колхоза вěсем 200 гектар ытла кěрхи тырăсем вырса пачěç, çуртри вырнă чухне тата тухăçлăрах ěçлерěç. В. Токсубаев юлташ тулă тата сěлě вырнă çěрте кунсерен 18—20-шер гектар вырчě.

Тырпул пухса кěртме тытăнсан малтанхи кунсенче çитменлěхсемпе чăрмавсем те пулчěç. Уйрăм колхозниксем уя час тухмастчěç, ěçрен часах таврăнни те пулнă. Хăшпěрисем хăйсен килти ěçěсене туса пурăннă. Хирте кахалланса ěçлекенсем нормăна тултарман, пучах нумай тăкса хăварнă. Пуçламăш парторганизаци çак çитменлěхсене вăхăтра пěтерсе пычě.

Пирěн умра мěнпур тырпула августăн 25-мěшě тěлне пухса кěртес, сентябрь пуçланнă тěле авăн çапса пěтерес, сентябрěн 20-мěшě тěлне пěтěм ялхуçалăх ěçěсене туса пěтерес задача тăрать. Колхозри коммунистсемпе мěнпур колхозниксем çак задачăна чыслăн пурнăçлассишěн ырми-канми кěрешеççě.

В. МЕШАНИНОВ,
колхозри пуçламăш парторганизаци секретарě.

Чыслă ěç

Мана виççěмěш бригадăра агитатор пулса ěçлеме çирěплетнě. Уй-хирте хěрӳ ěçсем пуçланиччен агитаторсен канашлăвě пулчě. Унта тырă вырнă вăхăтра агитаторсем мěнле ěçлемелли çинчен тěплěн ăнлантарчěç.

Канашлу хыççăн эпě ěç планě туса хатěрлерěм. Планра мěнле темăсем тăрăх калаçусем иртермеллине, хаçатсем çинчи материалсене вуласа парассине, радиопа паракан хыпарсене пěлтерсе тăрассине кěртрěм. Çакăнпа пěрлех палăртнă ěçсене мěнле майсемпе туса пымаллине те шухăшласа пăхрăм.

Тырă вырма тухсан колхозниксемпе «Социализмла ăмăрту — çитěнӳсем тума пулăшакан тěп меслет» тема тăрăх калаçу иртертěм. Ку вăхăтра сдельщина йěркипе ěçлессине организацилемен пулнă. Колхозниксене сдельщина мěн тери усă пани çинчен каласа патăм. Тепěр кунне бригадăра тырă вырас тата кěлте сыхас ěçсене сдельщина йěркипе туса пыма тытăнтăмăр. Ěç тухăçлăхě чылай ӳсрě. Унччен кайра пынă колхозниксем те темиçе хут лайăхрах ěçлеме пуçларěç.

Халě колхозниксене ССР Союзěн Верховнăй Совечěн пиллěкмěш сессийěн решенийěсем çинчен ăнлантарса паратăп. СССР Министрěсен Совечěн Председателě Г. М. Маленков юлташ каланă сăмаха вуласа патăм. Сесси решенийěсене колхозниксем чун-чěререн ырлаççě.

М. ТОКСУБАЕВ,
агитатор.

Тырпул пухса кěртесси—чи ответлă тапхăр

Çуракине ăнăçлăн вěçленě хыççăнах эпир тырпул пухса кěртме хатěрленме тытăнтăмăр. Жнейкăсене, тырă тасатмалли машинăсене, кěрепленě çавасемпе çурласене, транспорт инвентарěпе лаша таврашěсене хире тухиччен чылай малтан юсаса çитертěмěр. Витнě итемсене, авăнсемпе сушилкăсене, тырă склачěсене юсарăмăр, çěнěрен те турăмăр. Ěç планě туса çирěплетрěмěр. Унта камăн мěн тата мěн чухлě ěç тумаллине палăртрăмăр. Тарăнăн шухăшласа тунă плана бригадăри колхозниксен пухăвěнче сӳтсе яврăмăр. Кěскен каласан, пирěн бригада тырпула пухса кěртме лайăх хатěрленсе тухрě.

Кěрхи тырăсем пур çěрте те пулса çитесси кěтсе тăмарăмăр. Пěр-пěр лаптăкра пулса çитнине çийěнчех вырма тытăнтăмăр. Колхозниксен мěнле ěçленине, ěçе хăçан тухнине кашни кун тěрěслесе тăтăм. Ěç хыççăн бригадăри колхозниксемпе производствăлла канашлусем иртернě. Унта кам паян мěн чухлě ěçлени, ěçе хăçан тухни, колхозра тата бригадăра ăмăрту мěнле сарăлса пыни çинчен каласа панă. Малта пыракансен ěç опычěсемпе, бригада умěнче тăракан ěçсемпе паллаштарнă. Ěçе юлса тухакансене бригадăри колхозниксем хăйсем те асăрхаттарсах тăчěç. Ěçе çапла йěркелени кěрхи тырăсене хăвăрт пухса кěртме май пачě. Ыраш вырма июлěн 24-мěшěнче тытăнса, августăн пěрремěшě тěлне пěтěмпех вырса пěтертěмěр, капана хыврăмăр.

Ыраш вырса пěтернě çěре çуртрисем те пулса çитрěç. Бригадăн 12 гектар кěрхи тулă, 47 гектар çурхи тулă, 55 гектар сěлě, 4,2 гектар пăрçа вырмалла, 10 гектар йěтěн татмалла. Ыраш вырнă чухнехи пекех, çуртрисене вырнă чухне те бригадăна механизаторсем нумай пулăшрěç. Пěтěм культурăсенчен çуррине ытларах комбайнсемпе вырнă. Çав хушăрах колхозниксем те тухăçлă ěçлерěç. Тырă вырса сыхаççě-и, авăн çапса тырă сăвăраççě-и, кěлте турттараççě-и—пур çěрте те нормăна иртерсе тултараççě.

Ěçре пирěн черетлěх çук. Пěрисем вырса сыхаççě, теприсем итем çине турттарса капана хываççě.

Хире тухнă малтанхи кунсенче ěçре чăрмавсем те пулкаларěç. Уйрăм колхозниксем ěçе час тухмастчěç. Сăмахран, А. Абакумов колхозник хăйěн килěнчи ěçěсемпе вăхăта ытларах иртеретчě. Ěç хыççăн пулакан канашлусенче бригадăри колхозниксем кахалсене, колхоз ěçě çине тěрěс мар пăхакансене питлерěç. Ěç дисциплинине пăсакан колхозниксем çинчен стена хаçатěнче çырчěç. Çакăн хыççăн колхозниксен дисциплини нумай çирěпленчě.

Пуçламăш парторганизаци бригадăра политикăлла-массăлла ěçе куллен лайăхлатса пычě. Агитаторсем колхозниксемпе калаçусем иртереççě, кашни куллен хаçатсем çинчи материалсене вуласа параççě. Н. Скребков юлташ жнейкăпа ěçлет. Лашасене апатлантарма е кантарма тăратсан, вăл колхозниксемпе калаçу иртерет, хаçатсем вуласа парать. Бригадăра вăл «Эпир миршěн ăмăртатпăр», «Коммунистсен партийě 50 çул тултарчě» тата ытти темăсем тăрăх калаçусем иртерчě. Халě вăл колхозниксене ССР Союзěн Верховнăй Совечěн пиллěкмěш сессийěн решенийěсемпе паллаштарать. Сесси решенийěсем колхозниксемпе тата тухăçлăрах ěçлеме хавхалантараççě. Колхозниксем хальхи пек хавхаланса ěçленине курман. Пурте вěсем тăрăшаççě, уйри тырпула хăвăрт та пěр тăккаламасăр пухса кěртессишěн пархатарлăн ěçлеççě.

Политикăлла-массăлла ěçе куллен туса пыни, унăн пахалăхне лайăхлатни ěçре ӳсěмсем тума пулăшрě. Ир пулакан культурăсене пěтěмпех вырса пěтерсе капана хыврăмăр. 10 гектар çинчен йěтěн татнă. Бригадăри колхозниксем сентябрěн 20-мěшě тěлне пěтěм ялхуçалăх ěçěсене вěçлеме обязательство илчěç. Пирěн колхозниксен сăмахě çирěп. Эпир хамăр илнě обязательствăна пурнăçлатпăр.

П. АБАКУМОВ,
пěрремěш уй-хир бригадин бригадирě.

Шупашкар хулинчи агитаторсен пухăвě

Çак кунсенче Чăваш академи театрěн çуртěнче Шупашкар хулинчи агитаторсен пухăвě пулса иртрě. Пухура 700 çын ытла пулчě.

СССР Верховнăй Совечěн депутачě, Чăваш АССР Верховнăй Совечě Президиумěн председателě З. А. Андреева юлташ агитаторсене СССР Верховнăй Совечěн пиллěкмěш сессийěн ěçěсем çинчен доклад туса пачě.

Докладчик Верховнăй Совет йышăннă çěнě Законсем çинчен тата вăл Законсем пирěн çěршыври халăх хуçалăхне малалла аталантарас, ěçсыннисен пурнăçне лайăхлатса пырас тěлěшпе пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен тěплěн каласа пачě. З. А. Андреева юлташ кунпа пěрлех хамăр республикăри ěçсем çинчен каларě, республикăри хăшпěр промышленность предприятийěсен ěçěнчи тата ялхуçалăхěнчи çитменлěхсем çинчен, вăл çитменлěхсене пěтерсе пырас тěлěшпе агитаторсем умěнче тăракан задачăсем çинчен каласа пачě.

Свинаркăсен ăмăртăвě

ЙĚПРЕÇ. Сталин ячěпе тăракан колхозри свинаркăсем кăçал кашни сысна аминчен 18-шар çура илсе ӳстерессишěн ăмăртса ěçлеççě. Ăмăртура В. Сидорова, В. Волкова свинаркăсем малта пыраççě, вěсем хăйсене çирěплетсе панă кашни сысна аминчен 9-шар çура илнě. Çурасем лайăх çитěнеççě. Часах сысна амисем иккěмěш хут çурасем туса параççě.

Ферма сысна ěрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă. План тăрăх 285 пуç сысна пулмалла пулсан, халě 390 сысна шутланать.

Фермăра йывăр ěçсене механизациленě, кăçал çěнě вите тунă, шлак-бетонран кормокухня лартнă. Сыснасем валли ятарласа 20 тонна силос хывнă. Колхоз çур çул хушшинче фермăран 40 пин тенкě тупăш илнě.

И. ИОНОВ.

„Коммунизм ялавě" хаçатра çырнă хыççăн

„Ěç тухăçлăхне ӳстерсе пымалла"

Ěçсынни депутачěсен Сěрпӳ район Совет исполкомěн ялхуçалăхěпе хатěрлев управленийě «Коммунизм ялавě» хаçатра августăн 2-мěшěнче пичетленнě «Ěç тухăçлăхне ӳстерсе пымалла» ятлă статьяри фактсем тěрěс пулни çинчен пěлтерчě.

Ялхуçалăхěпе хатěрлев управленийě тата МТС дирекцийě тырпул пухса кěртнě çěрте ěç тухăçлăхне ӳстерме тата машинăсемпе туллин усă курма тивěçлě мерăсем йышăннă. Тырпул пухса кěртес енěпе кая юлнă колхозсене пулăшнă.

„Машинăсемпе ěçлессине хакламаççě"

«Коммунизм ялавě» хаçатра августăн 5-мěшěнче «Машинăсемпе ěçлессине хакламаççě» ятлă çыру пичетленěччě. Комсомольски райисполкомěн ялхуçалăхěпе хатěрлев управленийě çырура асăннă çитменлěхсене пěтерес тěлěшпе тивěçлě мерăсем йышăнни çинчен пěлтерчě.

«Гигант», Мичурин ячěпе, Ленин ячěпе тăракан колхозсенче малтанхи вăхăтра комбайнсемпе çителěксěр усă курнă, кěрхи тырăсем пухса кěртес енěпе юлса пынă пулсан, халě кěрхи тырăсене пухса кěртнě хыççăн, комбайнсемпе çуртри пухса кěртме тытăннă.

„Урамри канашлу"

«Коммунизм ялавě» хаçатра августăн 1-мěшěнче пичетленнě «Урамри канашлу» ятлă фельетона Ěçсынни депутачěсен Советски район Совечěн исполкомě сӳтсе явнă. Исполком фельетонра çитменлěхсене тивěçлипе критикленине, район кěперсем тăвас тата кивě кěперсене юсас енěпе кашни çулах юлса пынине, кăçалхи плана 20 процент кăна тултарнине палăртнă.

Кěперсем тăвас тата çулсене лайăхлатас ěçсем çине çиелтен пăхнăшăн район Совечěн исполкомěн çул-йěр пайěн заведующине Т. Калитов юлташа ятланă, çулйěр строительствипе кěперсем тутармалли тата кивě кěперсене юсаттармалли плана кăçалхи ноябрěн 1-мěшěччен тултармалла тăвассишěн тивěçлě мерăсем йышăнма хушнă.

„Столовăйра йěркелěх çук"

Июлěн 21-мěшěнче «Коммунизм ялавě» хаçатра пичетленнě «Столовăйра йěркелěх çук» ятлă çырура Атăл леш енчи торф предприятийěнчи столовăй рабочисемпе служащисен ыйтăвěсене çителěксěр тивěçтерсе пынине, Чăвашторг уйрăмě кунти çитменлěхсемпе килěшсе пурăннине, столовăй йěркеллě ěçлемелле тума тăрăшманнине кăтартса панăччě.

Чăвашторг директорě Белянкин юлташ çырура çитменлěхсене тěрěс кăтартса пани, çырăва столовăйра ěçлекенсен производствăлла канашлăвěнче сӳтсе явни çинчен пěлтерчě. Кирлě пек ěçлесе пыманшăн столовăй заведующине Борисова Чăвашторг ятланă, Ипатова буфетчицăна асăрхаттарнă, производство заведующине Ветохина—вырăнтан кăларнă.

Чăвашторгăн Атăл леш енчи уйрăмě столовăй ěçне лайăхлатма, кирлě продуктсене вăхăтра тăратма тивěçлě мерăсем йышăннă.

ФЕЛЬЕТОН

Култаков системинчи чăпта историйě

Мамăшри пěр çурт умěпе иртсе пынă чухне чăпта куписем выртнине курăтăн. Мěнле-ха ку капла,—тěлěнеççě çынсем,—кунта чăпта тавраш пулмалла мар-çке? Ялпо чăптапа суту-илӳ тăвакан организаци мар вěт. Ялпо членěсене чăпта кирлě мар, вěсем паха йышши таварсем туянасшăн!

Ялти ěçченсем тěлěнеççě: ăçтан, мěн тума кӳрсе килнě çакăн чухлě чăпта пирěн пата? Ăçта кайса сутаççě-ши вěсене? Ыйтаççě, тěлěнеççě, анчах тěпне-йěрне тупаймаççě. Ăна тума та йывăр. Унăн тупсăмě çыхланмаллипех çыхланнă. Чăпта историйěпе унăн вăрттăнлăхне ялпора ěçлекенсем никама та пěлтермеççě. Ун пирки Ишлей райсоюзěн председателě Е. Артемьева юлташ та пěлмěш пулать.

— Сирěн Мамăш ялповěнче чăпта сутăн илеççě-им?

— Çук,—тет вăл, именнě пек пулса.—Эпě ун пирки нимěн те пěлместěп. Отчетра чăпта илсе сутни çинчен вěсем нимěн те пěлтермеççě, çавăнпа эпě нимěн те пěлместěп.

Çапла, курман-илтмен.

Апла пулсан, акă, итлěр, пěлěр.

Пěррехинче, Мамăш ялповěн магазинěсенче ěçлекен продавецсен канашлăвě пулнă. Кун йěркинчи ыйтусене пăхса тухнă хыççăн, çав канашлăва пынисенчен хăшпěрисем часах тепěр канашлăва кайнă. Вара вěсем ялпо председателěн таварсем кӳрсе килес енěпе ěçлекен заместительне Ф. Култакова çапла каланă:

— Култаков юлташ, мěнле ара капла? Малтанхи вăхăтсенче эпир чăпта илсе сутма та пултараттăмăрччě, халě вара ăна тума май çук. Чаратăр, хушмастăр. Мěнле пурăнас-ха нимěнле усламсăр? Тавар çаврăнăш планне тултарайман пирки хамăра та сахалтарах тивет вěт-ха?!

— Тьфу,—тенě председатель заместителě,—миçе çул ěçлетěр, халě те пурăнма вěренейместěр?! Эсир чěчě ачисем мар вěт? Вěренме вăхăт ěнтě!

— Çаплипе çаплах та-ха, анчах...

Председатель заместителě, сулахай куçне кăштах хěснě те, ăс пама пуçланă:

— Эсир чăпта илме хăратăр-и? Ну, чарнă пултăр, ерунда! Пирěн вěт хамăрăн система! Çак системăра ěçленě чухне пурăнма та пěлес пулать. Паянтан пуçласа эсир каллех чăпта илме пултаратăр. Анчах илме пěлěр. Тепěр чухне квитанци çырмасан та юрать. Кирлех пулсан, эпě сире ку тěлěшпе план та пама пултаратăп, анчах хутпа мар, сăмахпа кăна. Тата çакна та асра тытăр: сирěн пата кам та пулин чăпта сутма пырать пулсан, вăл сире ырă тăвать. Эсир те вěсене хăйсем ыйтакан тавара е укçа-тенкěне вăхăтра парса ярăр. Чăпта хакне промысла артелěсем тӳлекен хакран пысăкрах тăвăр, вара вěсем артель мунчалинчен çапса хатěрлекен чăптанах пирěн пата килсе парěç.

— Тавтапуçăх, тавтапус! — тенě продавецсем савăнса. Малашне эсир вěрентнě пек пурăнăпăр, аптрамăпăр, сире хăвăра та манса хăвармăпăр,—килěштернě Култаков майлисем çав кун.

Пуçланнă вара ялпора хěрӳллě ěç: магазинсемпе лавккасене чăпта çине чăпта пынă, продавецсем кунне-çěрне те тиркемен. Ялпори «ěçченсем» чăпта пырса сутакансене пěрисене—сахăр, теприсене—çăнăх, ыттисене — магазинсемпе лавккасенче мěн лайăххи пур, çавсене пара-парă янă.

Иккěмěш квартал вěçленсе пынă, инвентаризаци тума та вăхăт çитсе тăнă. Паллах, кашнин ěçе хăйěн вăхăтěнче тумалла. Вăхăт çитсен Мамăш ялповěнче те инвентаризаци пуçланнă. Шутланă, çырнă, каллех шутланă, приходсемпе расходсене «танлаштарнă», хăшпěрисем тавлашнă, тěпченě, ыйтса пěлнě. Анчах кăлăхах пулнă: пурпěрех тупсăмне тупайман, инвентаризацине те вěçлеймен. Култаков системинче çыхланса ларнă сăмсана сӳтме çапах май çук-ха.

— Мамăш хамăн система,—тенě вăл унтан «сăмхари вăрттăнлăх» çинчен пěлме хăякан çынсене.—Сире, пирěн ěç çинчен пěлме хăякан хăюллăрах çынсене, пирěн ěç çинчен пěлмесен те юрать!

— Çапах та, чăптана мěн хакпа илтěр, ăçта сутрăр?— ыйтаççě унтан ку ěçе чухлакан çынсем.

— Мěнле чăпта? — ответлет вěсене Култаков. — Курман-илтмен. Ним чăпти çинчен те эпě пěлместěп.

Çук, текех тунаймě Култаков! Фактсем çакăн пек: юлашки икě уйăх хушшинче кăна Култаков системинчи «туссем»: Мамăш ялповěн тěп магазинěнче ěçлекен М. Мастеров продавец 15.519 тенкěлěх, склад заведующийě П. Щеголин 13.752 тенкěлěх, Ф. Култаков 4.152 тенкěлěх, Тимой Мамăш уйрăмěн продавецě А. Прохоров 6 пин тенкěлěх, Çěньял Чурачăк уйрăмěнчи П. Маркитанов продавец 5.550 тенкěлěх чăпта илсе сутнине лайăх пěлетпěр. Пěр-икě уйăх хушшинче кăна ялпо 50.751 тенкěлěх чăпта туяннă! Çавăн чухлě «тавара» вěсем кам мěнле хакпа илес тенě, çавăн пек хак парса «туяннă»: пěрисем пěр чăптана тăватă тенкěпе, теприсем вара 5—6 тенкě парса илнě.

Чăпта пуханнă та пуханнă, юлашкинчен унăн шутне те манса кайнă. Ялпо председателěн заместителě Култаков вара хăйěн «йыхравçисем» пухса хатěрленě чăптана Шупашкарти инкубаторпа чěп кăларакан станцине кунěн-çěрěн леçсе парать, анчах усламсăр мар, услампа: вырăнта илсе хатěрленě чăптана вăл хăйне илме ларнă хакран тепěр хут ӳстерсе сутма та именсе тăмасть. Лешсем илеççě, государство укçи-тенкине хěрхенсе тытмаççě.

Чее кушак пек йăпăлтатма юратакан Култаков Шупашкарти «Росснабсбыт» текен организацири «шлепкесене» те хăйне майлă çавăрма ěлкěрнě:

— Сире эпир вуншар пин тенкěлěх чăпта сутатпăр, эсир те пире çавăн чухлěх хакла кăякан таварсем улăштарса парăр,—ультиматум лартнă вăл. Çакăншăн «Росснабсбыт» управляющийě Селезнев юлташ питě кăмăллă пулнă, вăл халě те çакнашкал лайăх «операци» тума пěлнинчен хăй тěлěнсе пурăнать, теççě пěлекенсем.

Çак çыхланнă сăмхари мěнпур вăрттăнлăхсем çитес вăхăтра тăрă шыв çине тухěç, ăна судпа следстви органěсем тупса палăртěç.

В. ЧЕРНОВ.
Р. МАЛЮТИН,
Ф. МАЛЫШКИН.

Ишлей районě.

Вěсем вěренеççě

— Ěлěк, патша чухне, пирěн ялта алă пусма пěлекен çын пулман,—теççě Васкасси ял Советне кěрекен ялсенчи ватăрах çынсем.

Çавă паянхи ял çыннисемшěн ěненмелле мар пек туйăнать, мěншěн тесен халě пурте хут пěлеççě, алă пусма çеç мар, хăйсем çынсене вěрентеççě, кăткăс машинăсемпе ěçлеме пултараççě. Анчах ěлěкхи ваттисем калашлех пулнă.

— Пирěн ял çыннисем ěлěк вěренмен,—аса илет 65 çула çитнě Иван Васильевич Васильев, колхозри пуçламăш парторганизаци секретарě.—Вěренме ялта шкул пулман. Эпě аллă çул каялла Уйкас Янасалти шкулта вěрентěм. Унта 17 ялтан 30 ача çӳретчěç. Эпир хальхи хамăр ял Советне кěрекен тăватă ялтан тăваттăн вěренеттěмěр. Шкулě кěлетрен тунăскерччě те хěлле сивě пулатчě. Халě мěнле-ха? Паян пачах урăхла. Ěлěк пěр шкул çеç пулнă 17 ялта халě пуçламăш шкулсемпе сичě çул вěренмелли вунă шкул ытла ěçлет. Вěсенче ачасем йышлăн вěренеççě. Акă хамăр ялти сичě çул вěренмелли шкултах 200 ытла ача вěренет.

Хальхи ялта питě пысăк улшăнусем пулнă. Кунта Ильич ячěпе тăракан колхозра хут пěлмен çын пур тесен такам та тěлěннě пулěччě. Коммунистсен партийě куллен тăвалла тăрăшнипе пирěн çынсем нумай вěреннě, культурăллă çынсем пулса тăчěç. Çакăншăн пирěнтен кашниех савăнать.

Парторганизаци секретарě колхозра вăтам шкултан тата аслă шкултан вěренсе тухнă çынсем нумайăшě çинчен каласа пачě. Почтальон яла кашни кунах Горький, Хусан, Мускав, Йошкар-Ола, Шупашкар тата ытти хуласенче почта штампěсене пуснă çырусем нумай илсе килет. Çав хуласенче пирěн колхоз çыннисем вěренеççě, ěçлеççě. Инженерсем, механиксем, офицерсем, фельдшерсем, учительсем, агрономсем, зоотехниксем вěсем. Тăван çěршывшăн, халăхшăн пысăк усăллă ěç туса пурăнаççě.

Колхозлă ял çыннисем малалла та вěренеççě. Почтальон яла студентсен çырăвěсене купи-купипех илсе килет. Акă вăл Мария Леонтьева колхозницăна темиçе çыру парса хăварчě. Унăн пěр ывăлě Василий Горькинчен çырать, лайăх вěренни çинчен пěлтерет. Александр та вěренӳ ăнăçлă пыни çинчен çырать. Зоотехник пулма вěренекен Юрий каникулта пулнăскер, пиччěшěсем патěнче хăй мěнле канса пурăнни çинчен çырчě.

Горький хулинчи индустриальнăй институтра вěренекен Вячеслав Павлов заводра практикăра пулни çинчен çырать. Вăл металл енěпе ěçлекен инженер пулать. Леонид Максимов пединститутра вěренет, Фадей Платонов, Иван Федоров, Н. Пантелеймонов ялхуçалăх институчě пěтерсе, зоотехниксем пулса тухаççě.

Колхозниксен ывăл-хěрěсенчен вăтам шкулсенче вěренекенсем те нумай. Т. Леонтьев геолог, Н. Иванов энерготехник, М. Яковлева фельдшер пулма вěренеççě.

Теприсем тата ěçленě вăхăтрах аслă шкултан вěренсе тухаççě. А. Петров пединститутра, П. Михайлов учительсен институтěнче заочно вěренеççě.

Çак çулсенче ял çыннисенчен колхоз кадрěсем нумай вěрентсе хатěрленě. Икě çул хушшинче 15 тракторист вěренсе тухнă. Пěр тăван Петрпа Филипп Семеновсем тракторист пулса ěçлеççě. Иртнě çулсенче колхозница пулнă Ульяна Александрова халě трактористка. Вăл çураки, ырхи çěртме тумалли заданисене чылай иртерсе тултарчě, халě кěракинче ăнăçлă ěçлет. П. Улюркин, Н. Семенов трактористсен ячěсене те МТС-ри механизаторсем хушшинче чысласа асăнаççě.

Çак колхоз членěсем пулнă Н. Петровпа П. Павлов трактор бригадисен бригадирěсем пулса ěçлеççě. Павлов бригадине Ильич ячěпе тăракан колхоз çумне çирěплетнě. Механизаторсем пулăшнипе колхоз ялхуçалăх ěçěсене нумай механизацилерě. Тырра пěтěмпех ретлě майпа акаççě. Вырса çапассине те машинăсемпе туса пыраççě

...Çěнě вěренӳ çулě пуçланать. Кăçал аслă шкулсене, техникумсемпе училищěсене вěренме каякансем йышлă. Нумаях пулмасть, ку ялта çуралса ӳснě профессор Н. В. Никольский юлташ, киле курма килнěскер, вěсемпе тěл пулчě. Профессор çамрăксене тăрăшса вěренме сывлăх сунчě.

Вěсем лайăх вěреннě, малалла та тăрăшса вěренěç.

Я. СИГАЕВ.
Ильич ячěпе тăракан колхоз,
Советски районě.